## 3§. Чăваш чĕлхине тĕпченин кĕске историйĕ

Кирек хăш чĕлхере те халăх историйĕ палăрать, ахальтен мар ĕнтĕ чĕлхесене тĕпчени пысăк пĕлтерĕшлĕ наука ĕçĕ шутланать. Ун пек ученăйсене лингвистсем, е чĕлхе тĕпчевçисем, теççĕ. Вĕсем пулман пулсан, эпир тăван халăхăмăр епле пулса кайнине, ĕлĕк-авалтан мĕнле аталанса пынине хальхи пек туллин те тараннăн пĕлмен пулăттăмăр. Ĕлĕк-авал Хĕвеланăç Европăри халăхсем тĕнчере чăваш ятлă халăх пуррине пĕлмен. XVIII ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенче Раççейпе Швеци хушшинчи вăрçă вăхăтĕнче Полтава патĕнчи çапăçура вырăссем тыткăна илнĕ швед капитанĕ **Иоган Табборт фон Страленберг** (1676–1747 çулсенче пурăннă) 1711–1723 çулсенче Тобольск кĕпĕрнинче тыткăнра пурăннă чухне Çĕпĕр географине, унти халăхсен пурнăçĕпе чĕлхисене тĕпченĕ. Çавăн чухне Çĕпĕрте кунтан куçса кайнă чăвашсем те пурăннă. Швецие тыткăнран таврăннă хыççăн Страленберг 1730 çулта нимĕçле "Европăпа Азин çурçĕрпе хĕвелтухăç пайĕсем" ятлă кĕнеке пичетлесе кăларнă. Унта вăл ытти халăх чĕлхисен сăмахĕсемпе пĕрле 29 чăваш сăмахне (япала ячĕсемпе хисеп ячĕсене пĕрререн пуçласа вунна çити) çырса кăтартнă. Анчах та Страленберг вĕсене сасă тĕлĕшĕнчен тĕрĕс палăртайман, çавăнпа хăш-пĕр сăмахсем мĕне пĕлтернине уйăрса илме çук. Апла пулин те унăн ĕçĕ хăй вăхăтĕнче наукăшăн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă: Европăри халăхсем, чи малтанах ученăйсем, Çĕр çинче чăваш халăхĕ пуррине шăпах ĕнтĕ Страленберг кĕнекинчи 29 чăваш сăмахĕпе паллашса пĕлнĕ. Çакăн хыççăн чăваш чĕлхине тĕпчесе вĕренес ĕç çĕнĕ пусăма çĕкленнĕ. Ку енĕпе тунă тепĕр паллă ĕç Питĕрти наукăсен академийĕн историпе географи профессорĕ **Герард Фридрих Миллер** (1705–1783) ячĕпе çыхăннă. Вăл 1733 çулта вунă çуллăха Камчаткăна Раççейĕн çурçĕрти çĕрĕсене, унти халăхпа çутçанталăк пуянлăхне тĕпчеме янă экспедицие хутшăннă пулнă. Экспедици Чулхуларан Хусана Чăваш çĕршывĕ урлă иртнĕ чухне Миллер ертсе пынă отряд Шупашкарта та чарăнса тăнă, кунта экспедици членĕсем чăвашсен пурнăçĕпе, вĕсен йăли-йĕркисемпе паллашнă, 313 чăваш сăмахне çырса илнĕ. Ку та питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулнă. Çакăн хыççăн пирĕн чĕлхене тĕпчес ĕç тата анлăрах сарăлса каять. XVIII ĕмĕрте чăваш сăмахĕсене тĕрлĕ словарьсенче çырса кăтартаççĕ, анчах, шел пулин те, вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем пичетленсе тухайман, алçыру халлĕн çеç сыхланса юлнă. Çапăнса тухнисенчен II Кĕтерне патша хушнипе çырса хатĕрленĕ "Сравнительные словари всех языков и наречий" ятлă кĕнекене палăртмалла. Унта 285 сăмаха 200 чĕлхепе çырса кăтартнă, чăваш сăмахĕсем утмăл тăваттăмĕш вырăнта тăраççĕ.

1769 çулта Питĕрте чăваш чĕлхин пĕрремĕш грамматики пичетленсе тухнă. Çак кĕнекере чăваш чĕлхин грамматикине (морфологине) çырса кăтартнă, 1368 сăмаха чăвашларан вырăсла куçарса панă. Унăн авторĕ **Вениамин Пуцек-Григорович** шутланă тăрăх, чăваш чĕлхинче пурĕ сакăр пуплев пайĕ (япала ячĕ, паллă ячĕ, хисеп ячĕ, местоимени, глагол, наречи, междомети, хыççăмах), икĕ вĕçленӳ, икĕ хисеп (пĕрреллĕ тата нумайлă), пилĕк падеж пулнă.

1800 çулта "Кĕскетнĕ катехизис" ятлă пĕрремĕш чăвашла кĕнеке, 1804 çулта "Пĕчĕкçĕ катехизис"" пичетленсе тухаççĕ. Ку кĕнеке çумне "Букварь" хушса пичетленĕ.

1836 çулта Хусанта чăваш чĕлхин иккĕмĕш грамматики – "Начертания правил чувашского языка и словарь, составленные для духовных училищ Казанской епархии" – пичетленсе тухнă, унăн авторĕ **В. П. Вишневский** (1804–1885), чăвашсем хушшинче ĕçленĕ вырăс çынни, пуп çемйинче çуралса ўснĕскер, пулнă. Асăннă кĕнеке виçĕ пайран тăрать. Пĕрремĕш пайĕнче чăваш чĕлхин фонетики, сасăпа ударени тата чарăну паллисем çинчен каласа панă, иккĕмĕш пайĕнче чăваш чĕлхин грамматикине (морфологине) çырса кăтартнă, виççĕмĕш пайне словарь йышăнать. "Чăваш чĕлхинче вырăс саспаллийĕсемпе усă кураççĕ, çавăнпа вĕсене вырăс чĕлхинчи пекех çыраççĕ, каласса та çаплах калаççĕ", – тенĕ вăл унта. "Анчах чăваш букварĕ вырăс букварĕнчен уйрăлса тăрать, – тет малалла В. П. Вишневский, – мĕншĕн тесен чăваш чĕлхинче вырăс чĕлхинче çук сасăсем пур". Иккĕмĕш грамматика авторĕ чăваш алфавитне пысăк çĕнĕлĕхсемех кĕртеймен, кунта *а, ĕ, ç, ў* сасăсем пуррине асăрхайман. Чăваш грамматикине çырса кăтартнă чухне кĕнеке авторĕ çĕнĕ пуплев пайĕсенчен союза асăннă, *ачам, ывăлăм, хĕрĕм, упăшкам* йышши формăна чĕнў падежĕ тесе палăртнă, тĕрĕссипе вара çакă вăл камăнлăх форми шутланать. Чăваш чĕлхин иккĕмĕш грамматикин тĕп пайĕ – чăвашла-вырăсла словарь. Унта виçĕ пин сăмаха яхăн вырăсла куçарса панă, вĕсем пурте – тури диалект сăмахĕсем.

XVIII ĕмĕрĕн юлашки чĕрĕкĕпе XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче вырăсларан чăвашла чылай кĕнеке куçарса кăларнă, вĕсем пурте тĕн çинчен çырнăскерсем пулнă. Анчах та çав кĕнекесен чĕлхине ăнланма çăмăлах пулман, мĕншĕн тесен вĕсене вырăсларан чăвашла сăмах хыççăн сăмах куçарнă. Асăннă тапхăрта кун йышши кĕнекесем чылай çапăнса тухнă пулин те, вĕсен усси чăваш халăхне çутта кăларас ĕçре питĕ пĕчĕк пулнă.

Вырăсларан чăвашла кун пек сăмах хыççăн сăмах куçарма юраманнине чи малтан вырăс ученăйĕ **Николай Иванович Золотницкий** (1829–1880) асăрханă. "Ененĕр: сăмахсен çыхăнăвне чăваш синтаксисĕн законĕсене пăхăнмасăр йĕркеленĕрен, урăхла каласан, вырăсларан сăмах хыççăн сăмах куçарнăран, чиркўсенче чăвашла вĕрентсе каланă сăмахсене ... пачах та ăнланма çук". Çакна май вăл пĕр кĕнеке ятне чăвашла мĕнле куçарнине илсе кăтартать: "Конъ святой борнызинь, али хорав идю сине: епле манъ святой борнасъ?" Мĕнле ăнланмалла-ха çакна? Чăвашларан вырăсла сăмах хыççăн сăмах куçарсан ак мĕнле предложени пулса тухать: "День святой жизни, или ответ на вопрос: как мне быть святым?" Вырăсла ку предложени çапларах пулнă пулмалла. Кĕнекесене кун пек куçарма юраманнине лайăх ăнланса илсе Н. И. Золотницкий хăй кĕнекисенче чăваш чĕлхин законĕсене тытса пыма тăрăшнă. Çак вырăс ученăйĕн пĕлтерĕшĕ чăваш графикипе алфавитне тăвас тĕлĕшпе те пысăк пулнă. Тĕслĕхрен, вăл усă сасăсен йышĕнче *ў* сасă пуррине пуçласа асăрханă. Çак сасă вырăс чĕлхинче пулман, нимĕç чĕлхинчен йышăннă сăмахсенче çеç тĕл пулать (тĕслĕхрен, *Нюрнберг, флюгер, юрист*). Н. И. Золотницкий ăна палăртма чăваш алфавитне

*ӳ* саспалли кӗртнӗ. Ун шучӗпе, чӑваш алфавичӗ ҫак саспаллисенчен тӑнӑ: *а, я, э, е, ы, и, і, о, ӧ, у, ӳ, ю, й, ь, п, б, с, з, т, д, ш, ж, к, г, х, ѓ, в, р, л, н, м, ч.*

Чӑваш чӗлхинче ҫеҫ тӗл пулакан сасӑсене палӑртма Н. И. Золотницкий алфавитӗнче *ȧ, ė, ç* саспаллисем пулман. Вӗсене кайрантарах **Иван Яковлевич Яковлев** (1848–1930) шутласа тупнӑ. Унӑн пӗлтерӗшӗ чӑваш чӗлхин практика ыйтӑвӗсене татса парас ӗҫре питӗ пысӑк пулнӑ. Кунта чи малтанах вӑл ҫӗнӗ чӑваш алфавитне тунине палӑртмалла. Ун алфавичӗн пӗрремӗш варианчӗ 47 саспаллинчен тӑнӑ, вӗсенчен пиллӗкӗшӗ чӑваш сассисене палӑртнӑ, *о, ф* саспаллисем вырӑс чӗлхинчен йышӑннӑ сӑмахсенчи сасӑсене пӗлтернӗ. Вӑл туса хатӗрленӗ алфавитӑн иккӗмӗш вариантӗнче вара пурӗ те 27 саспалли ҫеҫ пулнӑ. 1873 ҫулта И. Я. Яковлев хӑй алфавитне тепӗр хут юсаса ҫӗнетет: *ъ, ь* саспаллисене *ӑ, ӗ* саспаллисемпе, латин саспаллине (*j*) вырӑс алфавитӗнчи *й* саспаллипе улӑштарать, *о, ф* саспаллисене алфавитран кӑларать. Ҫапла вара, вӑл алфавитра 25 саспалли ҫеҫ хӑварать: *а, ȧ, в, е, ё, и, й, к, л, ԯ, м, н, ӊ, п, р, с, ç, т, т̆, ҭ, у, ӳ, х, ш, ы.* Ҫакӑ Яковлев алфавичӗн юлашки варианчӗ шутланать. Ун никӗсӗ ҫинче вӑл 1873 ҫулта букварь ("Букварь для чуваш с присоединением русской азбуки") пичетлесе кӑларнӑ.

И. Я. Яковлев, орфографи правилисене ятарласа ҫырса хатӗрлемен пулсан та, хӑй кӑларнӑ кӗнекесенче паян кунччен вӑйра шутланакан чылай правилӑна никӗслесе хӑварнӑ.

И. Я. Яковлевӑн пысӑк пӗлтерӗшлӗ тепӗр ӗҫӗ вӑл – чӑваш литература чӗлхин никӗсне хывни. Вӑл кӑларнӑ кӗнекесен чӗлхи чӑн-чӑн чӑваш чӗлхи пулнӑ.

Тӑван чӗлхемӗре тӗпчес тӗлӗшпе пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ тепӗр ученӑй – вырӑс ҫынни **Николай Иванович Ашмарин** (1870–1933). Вӑл ҫак ӗҫе хӑйӗн пӗтӗм пурнӑҫне панӑ. Унӑн чи паллӑ ӗҫӗ – 17 томлӑ "Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки", е словарь. Унта вӑл 40 пин сӑмаха яхӑн ӑнлантарса панӑ. Паллах, ҫакӑн пек тӗлӗнмелле пысӑк ӗҫе Н. И. Ашмарин пӗччен тума пултарайман: ун патне Хусана Чӑваш ҫӗршывӗн тӗрлӗ вырӑнӗсенче пурӑнакан учительсемпе врачсем тата ытти вӗреннӗ ҫынсем словарь тума кирлӗ материал вӗҫӗмсӗрех ярса тӑнӑ, ученӑй хӑй те чӑваш ялӗсем тӑрӑх сахал мар ҫӳренӗ. Вӑл, вырӑс пулин те, чӑвашла тап-таса калаҫма вӗренсе ҫитнӗ, чӑваш юррисене, юмахӗ-халапӗсене нумай пӗлнӗ. Н. И. Ашмарин чӑваш халӑхне хӑйӗн тӑван халӑхӗ вырӑнне хурсах юратнӑ, ҫак таса туйӑм ӑна питӗ паха словарь туса хатӗрлеме вӑй-хал парса тӑнӑ. Унта вӑл чӑваш чӗлхин лексика пуянлӑхне, тӑван халӑхӑмӑрӑн пурнӑҫӗпе йӑли-йӗркисене, шухӑшӗ-ӗмӗчӗсене тарӑннӑн уҫса панӑ, ахальтен мар ӗнтӗ ҫак словаре чӑваш халӑх пурнӑҫӗн энциклопедийӗ тесе хакланӑ. Словарьте вырӑнти калаҫусенче усӑ куракан сӑмахсем те, тӗрлӗ ӗҫпе ҫыхӑннӑ терминсем те, ял, ҫырмаҫатра, юханшыв ячӗсемпе чӑвашсен авалхи ячӗсем те, сасса евӗрлесе калакан сӑмахсем те, хытса ларнӑ, сӑнарлӑ сӑмах ҫаврӑнӑшӗсем те питӗ йышлӑ тӗл пулаҫҫӗ. Н. И. Ашмарин пурӑннӑ вӑхӑтра кун пек пуян словарь, якут чӗлхин словарьне шута илмесен, урӑх нихӑш халӑхӑн та пулман. "Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки" революцичченех тухма тытӑннӑ

пулнă, анчах ун чухне малтанхи икĕ томĕ çеç çутă кун курма ĕлкĕрнĕ. Тухасса вара вăл пĕтĕмĕшпе 1928–1950 çулсенче пичетленсе тухнă.

Словарьсĕр пуçне Н. И. Ашмарин чăваш чĕлхи çинчен наука ĕçĕсем те чылай çырса хăварнă. Вĕсенчен паллăраххисем çаксем: "Материалы для исследования чувашского языка", "Опыт исследования чувашского синтаксиса" (икĕ кĕнеке) т. ыт. те. Вĕсенче ученăй чăваш чĕлхин фонетикине, е сасă тытăмне, морфологийĕпе синтаксисне, тури чăвашсен калаçăвне тĕпчесе тишкернĕ. Н. И. Ашмарин чăваш литература чĕлхи аталанăвĕн туртăмĕсемпе те интересленнĕ: хаçат-журналта пичетленсе тухакан статьясен чĕлхине сăнанă май вăл литература чĕлхин нормисене çирĕплетесси пирки те тарăн шухăшсем каласа хăварнă.

Совет тапхăрĕнче палăрнă чĕлхеçĕсенчен чи малтанах **Тимофей Матвеевич Матвеевпа** (1884–1939) **Федор Тимофеевич Тимофеева** (1887–1941) асăнмалла. Вĕсем чăваш чĕлхин практика ыйтăвĕсене татса памалли чи хĕрӳ тапхăрта ĕçлесе пурăннă. Октябрьти революци çĕнтернĕ хыççăн чăвашла кĕнекесем, хаçатсемпе журналсем йышлă тухма тытăнаççĕ, халăха вĕрентес ĕç анлăн сарăлса каять, çавна май чăваш чĕлхин обществăри функцийĕсене сарас ыйту çивĕччĕн тухса тăрать. Паллах, тăван чĕлхемĕрĕн практика ыйтăвĕсене татса пама пысăк пĕлӳллĕ филолог-специалистсем кирлĕ пулнă. Маларах асăннă Т. М. Матвеевпа Ф. Т. Тимофеев шăпах çавăн пек çынсем пулнă. Вĕсем чăваш шкулĕсем валли учебниксемпе программăсем, методика кăтартăвĕсем çырса кăларнă, вырăсларан чăвашла кĕнекесем куçарнă, учительсем вĕрентсе хатĕрленĕ. Кунсăр пуçне, çак ученăйсем чăваш чĕлхин фонетикипе грамматикине тата вырăнти чĕлхесене тĕпчесе наука ĕçĕсем çырнă. Акă вĕсем çырнă хăш-пĕр кĕнекесем: "Чăвашла тĕрĕс çырмалли правилăсем" (Ф. Т. Тимофеев), "Грамматика чувашского языка" (Т. М. Матвеев), "Чăваш чĕлхин грамматики" (Ф. Т. Тимофеев), "Чăваш чĕлхин методики" (Ф. Т. Тимофеев), "Краткий обзор чувашских диалектов" (Т. М. Матвеев).

Совет влаçĕн çулĕсенче чăваш чĕлхине тĕпчесе вĕренес ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунă ученăйсем хушшинче **Василий Георгиевич Егоровпа** (1880–1974) **Семен Петрович Горский** (1897–1975) паллă вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем тăван чĕлхене тĕпчесе филологи наукисен докторĕ ятне илнĕ малтанхи чăваш çыннисем пулнă. Çак тĕпчевçĕсем пысăк пĕлтерĕшлĕ наука ĕçĕсем çырса хăварнă. В. Г. Егоровăн паллăрах кĕнекисенчен çаксене асăнса хăвармалла: "Закон гармонии гласных в чувашском языке", "Введение в изучение чувашского языка", "Современный чувашский литературный язык в сравнительно-историческом освещении", "Этимологический словарь чувашского языка". Çак ĕçсенче вăл чăваш чĕлхи мĕнле пулса кайса аталаннине, унăн сасă тытăмĕпе грамматикине, диалекчĕсемпе литература чĕлхине тарăннăн çырса кăтартнă, наукăра çĕнĕ шухăшсем чылай каланă. В. Г. Егоров ĕçĕсене асăннă май уйрăмах унăн икĕ кĕнеки çинче чарăнса тăмалла. Пĕрремĕшĕ – "Закон гармонии гласных в чувашском языке". Мĕнле закон пирки пырать-ха сăмахĕ асăннă ĕçре? Чăваш чĕлхинче сингармонизм текен фонетика пулăмĕ пур. Çак сăмах уçă сасăсен килĕшĕвĕ тенине пĕлтерет. Чăваш чĕлхинчи уçă сасăсем икĕ ушкăна пайланаççĕ: çемçе

усă сасăсем *(э, ĕ, и, ÿ)* тата хытă усă сасăсем *(а, ă, о, у, ы)*. Сăмахăн малтанхи сыпăкĕнче çемçе усă сасă пулсан, ытти сыпăксенче те çемçе усă сасăсем пулаççĕ: *хитре, чипер, илемлĕ, хÿхĕм, çиçĕм, çитмĕл, чĕлĕм, пĕлÿ, çĕнетÿ, кĕрешÿ*. Сăмахăн малтанхи сыпăкĕнче хытă усă сасă пулсан, ытти сыпăксенче те çавăн пек сасăсем пулаççĕ: *паттăр, чаплă, утмăл, утăм, халăх, тăвăл, улăм*. Сăмахра усă сасăсем пĕр-пĕринпе çакăн пек килĕшсе тăнине шăпах ĕнтĕ с и н г а р м о н и з м з а к о н ĕ теççĕ. Маларах асăннă тĕпчев ĕçĕнче В. Г. Егоров çак закона, унăн тĕсĕсене питĕ тĕплĕ çырса кăтартнă. Çак ученăй çырса кăларнă этимологи словарĕ те питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чĕлхери кашни сăмахăн хăйĕн историйĕ пур: вăл чĕлхере пулса каять те малалла аталанать (унăн тулаш форми улшăнса, пĕлтерĕшĕ сарăлса пырать), çавна май халĕ усă куракан чылай сăмах ĕлĕк-авал епле пулса кайнине, хăш тымартан шăтса тухнине, мĕнле пĕлтерĕшлĕ пулнине ятарласа тĕпчемесĕр те пĕлме май çук. Сăмахăн чи авалхи формипе пĕлтерĕшне наукăра э т и м о н, вĕсене тĕпчекен наукăна э т и м о л о г и теççĕ. В. Г. Егоров маларах асăннă словарьте шăпах ĕнтĕ чăваш сăмахĕсем мĕнле пулса кайнине ытти тĕрĕк чĕлхисенчи сăмахсемпе танлаштарса çырса кăтартать. Çак словарь – тĕрĕк чĕлхисен вĕрентĕвĕнче пуçласа тунă чи паллă ĕçсенчен пĕри. Ăна тĕнчери ученăйсем хапăлласа йышăнчĕç.

В. Г. Егоров профессор тÿпи халăха вĕрентес ĕçре те пысăк: вăл чăваш шкулĕсем валли учебниксемпе словарьсем пичетлесе кăларнă, шкулсенче чăваш чĕлхине вĕрентекен учительсем хатĕрлес ĕçре нумай вăй хунă.

Чăваш чĕлхине тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе **С. П. Горский** тÿпи те пĕчĕк мар. Вăл тăван чĕлхен чи çивĕч ыйтăвĕсене – орфографипе пунктуаци тата терминологи ыйтăвĕсене – татса пама пĕтĕм вăй-халĕпе ăс-хакăлне парса ĕçленĕ, чылай ĕç çырса кăларнă. Вĕсенчен паллăраххисем çаксем: "Очерки по истории чувашского литературного языка", "Хальхи чăваш литература чĕлхин сиктаксисĕ", орфографи словарĕсем т. ыт. те. Наукăшăн уйрăмах унăн пĕрремĕш кĕнеки пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çак ĕçре вăл чăваш литература чĕлхин историне çырса кăтартнă, çавна май тăван литература классикĕн К. В. Ивановăн тата ытти çыравçăсен чĕлхине тĕплĕ тишкерсе тухнă, вĕсем чăваш литература чĕлхине малалла аталантарма мĕн тери пысăк ĕç тунине кăтартса панă.

С. П. Горский тĕпченĕ тепĕр пысăк тема вăл – чăваш чĕлхин синтаксисĕ. Анчах та ученăй тăван чĕлхе синтаксисĕн ыйтăвĕсене вырăс чĕлхи синтаксисне тĕпе хурса ăнлантарса панине палăртмалла. Вырăс чĕлхипе чăваш чĕлхи – тĕрлĕ ушкăнсене кĕрекен, çавăнпа грамматика тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕринчен тĕпренех уйрăлса тăракан чĕлхесем. Çакна шута илсе, наука ĕçне кайрантарах явăçнă ученăйсем (И. А. Андреев, М. Ф. Чернов т. ыт.) чăваш синтаксисне тĕпчес ĕçе наука никĕсĕ çине куçараççĕ.

С. П. Горский те, В. Г. Егоров пекех, чăваш шкулĕсем валли учебниксемпе орфографи словарĕсем, методика кăтартăвĕсемпе программăсем çырса кăларнă, Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче шкулсенче ĕçлеме учительсем хатĕрленĕ.

Чăваш чĕлхине тĕпчес ĕç уйрăмах 50-мĕш çулсенче анлăн сарăлса каять, ку вăл пысăк пĕлӳллĕ наука кадрĕсем вĕрентсе хатĕрленипе тата пирĕн республикăра наукăна аталантарма ытти юрăхлă майсем туса панипе çыхăннă. Çак вăхăталла Чăваш Республикинче общество-гуманитари наукисен центрĕ – чăвашсен наука тĕпчев институчĕ (халĕ Чăваш Республикин гуманитари институчĕ) чылаях вăй илсе тĕрекленет: вăл ертсе пынипе тăван чĕлхемĕрĕн историне, морфологийĕпе синтаксисне, фонетикипе фонологине, лексикипе фразеологине, литература чĕлхипе вырăнти калаçусене (диалектсене), пуплев культурин ыйтăвĕсене тĕпчесе çырнă ĕçсем, вырăсла-чăвашла, чăвашла-вырăсла словарьсем, орфографипе терминологи тата фразеологи словарĕсем чылай пичетленсе тухаççĕ. 50–80-мĕш çулсенче чăваш чĕлхи вĕрентĕвĕнче паллă йĕр хăварнă тĕпчевçĕсенчен филологи наукисен докторĕсене М. Р. Федотова, И. А. Андреева, Л. П. Сергеева, Н. П. Петрова, М. Ф. Чернова, М. И. Скворцова, Г. Е. Корнилова, В. И. Сергеева, Н. И. Егорова, филологи наукисен кандидачĕсене И. П. Павлова, В. И. Котлеева, А. С. Канюковăна, Г. А. Дегтярева, Ю. М. Виноградова, Р. И. Цаплинăна, Е. Ф. Васильевăна палăртмалла. Тăван чĕлхемĕре тĕпчес ĕçре Н. А. Андреевпа А. И. Ивановăн тӳпи те пĕчĕк мар.

Чăваш чĕлхи – чи авалхи тĕрĕк чĕлхисенчен пĕри: унта ытти чĕлхесенче сыхланса юлман е тĕл пулман сăмахсемпе грамматика формисене асăрхама пулать, кусем вара чĕлхе историне тарăнрах тĕпчесе пĕлме пулăшаççĕ. Çавна май чăваш чĕлхипе ытти халăх ученăйĕсем те хытă интересленеççĕ, унăн фонетикине, лексикипе грамматикине тĕпчес ĕçе хутшăнаççĕ.

## 4 §. Тăван чĕлхепе вырăс чĕлхин чăваш халăхĕн пурнăçĕнчи пĕлтерĕшĕ

Тăван чĕлхе ыйтăвĕсене мĕншĕн çакăн пек çине тăрсах тĕпчеççĕ-ши? Мĕншĕн тесен вăл кашни çын пурнăçĕнче питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Эпир ăна мĕн ачаран анне кăкăрĕн сĕчĕпе пĕрле ăша хывса ӳсетпĕр: малтан килте ăна асатте-асанне, кукаçи-кукамай, атте-анне, пиччесемпе аппасем тата ытти çынсем мĕнле калаçнине тăнласа, унтан ача яслийĕпе садĕнче, вăтам шкулăн кĕçĕн тата аслă класĕсенче, кайран пурнăç çулĕпе хамăр тĕллĕн утнă май вĕренетпĕр, çапла майпа кашни çын чĕлхемĕрĕн иксĕлми пуянлăхне мĕн пĕчĕкрен тытăнса ватăличченех ăша хывса, пĕрчĕн-пĕрчĕн, сăмахăн-сăмахăн вĕренсе пырать. Тăван чĕлхене юратман, хисеплемен, шута хуман çын хăйĕн ашшĕ-амăшне те, тăван ялне те юратмасть, тăван халăхăмăрпа çĕршывăмăра та хисеплемест. Чăвашла калаçса эпир мĕн ачаранах шухăшлама, пурнăçăн кăткăс пулăмĕсене ăнланса ăша хывма вĕренсе пыратпăр.

Чĕлхе пĕлтерĕшĕ уйрăм çынсен пурнăçĕнче çеç мар, çак чĕлхепе калаçакан пĕтĕм халăх пурнăçĕнче те питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Хальхи вăхăтра пирĕн çĕршывра тата СНГне кĕрекен ытти çĕршывсенче пурĕ икĕ миллион чăваша яхăн пурăнать. Çын шучĕпе пирĕн халăх Раççейре тăваттăмĕш вырăн йышăнать (вырăссемпе украинецсем тата тутарсем